# КĔРЕКЕ ЮРРИ

Сăвви Василий Давыдов-Анатрин
Кĕвви Николай Эриванован




Н-69467
Национальная библиотека
Чувашской Республики




Кĕр кунĕ çитсен, килетпĕр юри,
Пуçлатпăр пĕрле тăванлăх юрри.

*Хушса юрламалли:*
Ыр пурнăç, телей,
Сунатпăр сире.
Каятпăр киле,
Ăсатăр пире.

Кил-çуртăр таса, сĕтелĕр – тулли,
Мĕн тумĕ хальхи ĕçчен çын алли.

*Хушса юрламалли.*

Тăванлăх юрри çĕклетĕр чуна,
Манас çук эпир нихçан çак куна.

*Хушса юрламалли.*

# КАÇХИ ИЛЕМ

Сăвви Василий Давыдов-Анатрин
Кĕвви Николай Эривановăн




Сав - нă ту - сăм, эс тух - сам - ччĕ Пĕр - ле
ю - рă юр - ла - ма. Сав - нă ту - сăм,
эс тух - сам - ччĕ Пĕр - ле ю - рă юр - ла -




Сад пахчийĕ чечек сарчĕ,
Епле ырă сывлама.
Савнă тусăм, эс тухсамччĕ
Пĕрле юрă юрлама.

Эх, мĕн чухлĕ кĕмĕл çăлтăр
Çиçет пĕлĕт маччинче.
Лăпкă кӳлĕ йăлтăр-йăлтăр
Вылять улăх варринче.

Çӳлте ылтăн çурла уйăх
Шăвать пĕлĕт хушшипе.
Эп куратăп: каçхи улăх
Ташлать унăн çутипе.

Çакна эпĕ йăлтах сыртăм
Таса шурă хут çине.
Каçхине те эс, çĕршывăм,
Çухатмастăн илемне.